*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

16 (2529) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
март
пуш 6

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕКУН



## Хаклă хĕрарăмсем!

Сире Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ – Мартăн 8-мĕшĕ – ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Пурнăçра чи çутти тата чи лайăххи – хĕрарăм сăнарĕнче. Мĕн авалтан этемлĕхĕн илĕртÿллĕ пайĕ сăпайлăхпа тимлĕхе, ĕçченлĕхпе тирпейлĕхе, ырăпа ачашлăха сăнарланă. Çак пахалăхсем вĕсене кил-çурта хăтлăх кÿме, çемье вучахĕн ăшшине упрама, ачасене воспитани пама, ĕç-хĕлĕн мĕнпур сферинче çитĕнÿ тума пулăшаççĕ.

Республика Правительстви ача амăшĕне ачалăха пулăшас, çемье хаклăхĕсене çирĕплетес енĕпе çине тăрса ĕçлет. Çамрăк амăшĕсене ача çуратнăшăн паракан сертификатсен, пособисен, амăшĕн капиталĕн, патшалăх тĕревĕн ытти тĕсĕн шучĕпе финанс енĕпе пулăшатпăр.

Амăшĕн тата ача сывлăхне сыхлакан тытăма çĕнĕ йышши медицина технологийĕсемпе çине тăрса пуянлататпăр. Ача сачĕсем пĕрин хыççăн тепри çĕкленеççĕ, çакă амăшĕсене декрет отпускĕ хыççăн професси енĕпе ĕçлемешкĕн хăвăртрах таврăнма май парать.

Патшалăх тимлĕхĕ хĕрарăмсене ырăнхи кун тĕлĕшпе шанăç кÿрет, республикăра ача çуратасси модăна кĕчĕ, нумай ачаллă çемьесен шучĕ ÿсет.

Ачасене çĕршывăн тивĕçлĕ гражданĕсем пулса çитĕнмешкĕн воспитани парассипе çыхăннă яваплăхăн йывăр тиевне хăвăрăн ачаш хулпуççисем çинче тытса пынăшăн сире чунтан тав тăватăп.

Юратнă хĕрарăмсем! Çуркуннехи çак уяв кунĕнче сире ырлăхшăн, чун пуянлăхĕшĕн, тĕнчене сутăрах, хăтлărах тата илемлĕрех тума пултарнăшăн чĕререн тав сăмахĕсем калатăп!

Сире тата сывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, юрату, ăнлану, тÿсĕмлĕх, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил ИГНАТЬЕВ.**

### ПАХЧИ-ПАХЧИ

## Атте-аннерен юлнă

Аттепе анне хайсем ĕмĕр тăршшĕпех çĕрулми лартса пурăннă çĕре мана парнелерĕç. Пĕрремĕш çулне эпĕ çав çĕр çинчен çĕрулми япăх кăларса илтĕм: шатрашкаллă, шăтăклă, вĕтĕ. Çакăн хыççăн çĕре пĕр çул кантартăм. Иккĕмĕш хут çĕрулми кăларса илсен вара горчицăпа фацели акса хăвартăм. Акнин пĕр пайĕ кĕркуннех шăтса тухрĕ, тепĕр пайĕ – çуркунне. Лайăх ÿссе чечеке ларчĕ. Унтан ăна çулса типессе кĕтрĕм, тепĕр тĕрлĕ сидерат акрăм.

Çуркунне касăсем туса пĕр-пĕринчен 30-35 сантиметртан çĕрулми лартса тухрăм. Ретсен хушшине 60-70 см хăварнăччĕ, унта тÿрех сидерат акрăм. Çĕрулмине купалама вăхăт çитсен хайхи шăтса тухнă курăка тăпрапа пĕрле паранкă çумне купаларăм. Кăштахран каллех йăран хушшине курăк акрăм.

Ку хутĕнче таса та яка çĕрулми кăларса илтĕм. Кашни тĕмрен – витрене яхăн. Кăçал сидератпа çĕрулми йăранĕсене вырăнпа улăштарăп. Хам валли çапла пĕтĕмлетÿ турăм: çĕре удобрени кирлĕ. Çулса пăрахнă сидерат вара темле лайăх удобренирен те кая мар, тен, лайăхрах та.

**Марина ШИШКИНА.**

### ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

• Вăрлăх акма хатĕрленĕ çĕре сиенсĕрлетме кĕл шывĕпе усă кураççĕ. Вăрă акиччен пĕр эрне маларах 3 л шыва 500-600 г алланă кĕл ямалла. Пăтратса вĕреме кĕртмелле, сивĕтмелле. Тăрăлса çитнĕ кĕл шывне таса шывпа (1:2) хутăштарса вăрлăх акмалли ешчĕке сапмалла.

• Купăста, хăяр, томат, пăрăç вăррине сиенсĕрлетме 20 минут майлă вĕри шывра (45-50 градус) тытмалла.

• Чернушка сухан вăррине 40 градус таран ăшăтнă шывра 8 сехет майлă тытсан вăл самай хăвăртрах шăтса тухать. Шыв сивĕнесрен вĕрине хушсах тămалла. Шÿтернĕ вăрлăха нÿрлĕ çĕр çине акмалла.

• Вăрлăх лайăх шăтса тухтăр тесен: тин вĕретнĕ 1 л шыва икĕ ывăç сухан хуппи ярса лартмалла, унтан 1 чей кашăкĕ кĕл хушса 1-3 кун тăрăлтарса лартмалла. Кайран ăна шывпа хутăштарса (1:3) вăрлăх акма хатĕрленĕ тăпрана сапмалла, çавăн пекех калча шăварнă çĕрте усă курма юрать.

• Тепĕр чухне калча «шлепкеллĕ» – вăрлăх хуппипе пĕрле шăтса тухать. Пĕлекенсем çакна вăрлăха питĕ ăшăх акнипе е тăпрара нÿрĕк çитменнипе çыхăнтараççĕ.

• Ăста пахчаçăсем калча лайăх ÿстĕр тесе пĕрремĕш çулçă тухнă хыççăн ăна эрнесерен сĕтлĕ шывпа шăвараççĕ: 1 л шыва çур стакан чухлĕ çусăрлатнă сĕт хушаççĕ.

• Калча савăтне чÿрече ани çине лартиччен кантăка çуса тасатмалла. Таса кантăк витĕр çутă ытларах кĕрĕ.

### ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 6.03 | 7.03 | 8.03 | 9.03 | 10.03 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, | 2-4 сехетре | –8 | –8 | –9 | +2 | –3 |
| | 14-16 сехетре | –7 | –8 | –6 | 0 | 3 |
| Юр çăвать | | – | * | – | – | * |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 758 | 758 | 760 | 752 | 752 |

## КИЛ

ЯЛ-ЙЫШ | ХÿТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

**ПАЯН кун тăршшĕ 11 сехет те 04 минут. Уйăх каталса пырать.**

**Тимахви кунĕ. «Тимахви кунĕ тĕлне пурăнса çитсен хĕл хăрушă мар тенĕ. Вĕренесем хурăн сĕткенлеме пуçлаççĕ. Çуркунне ир килсен кĕркунне те ир килĕ.**

**ЫРАН – Маври кунĕнче – кураксем, шăнкăрчсем вĕçсе килеççĕ. Кайăксем çак кунран маларах вĕçсе килни – çур ир килессе. Çанталăк çиллĕ пулсан çуркунне вăраха кайĕ.**

**ВИÇМИНЕ – Поликарп кунĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ. Сивĕсем каялла таврăнма пултараççĕ.Çăварниччен качча кайса ĕлкĕреймен хĕрсем туприсене тирпейлесе арчана хунă, çуркунне вĕçленессе кĕтнĕ.**

### ХАЛĂХ СĂНАВĔ

• Мартра час-часах тĕтре карни çу çумăрлă пуласса систерет.

• Пуш уйăхĕнчи çил-тăманра юр пĕр тикĕс выртмасан, хумлă-хумлă пулсан – пахчаçимĕçĕпе çуртырри лайăх пулĕ.

***Йывăç çинче хĕл каçакан лĕпĕшсен йăвине, типсе ларнă çимĕçе пухса çунтармалла.***

### ЫЙТУ – ХУРАВ

## Çĕрулми туянтăм

**? Шупашкарта çĕрулми куравӗнче пултăм. Вăрлăхлăх «Беллароза», «Чайка», «Рябинушка», «Гала» сортсем туянтăм. Вĕсем çинчен кĕскен те пулин каласа параймăр-ши?**

**Михаил РАЗУМОВ. Елчĕк районĕ, Тускел ялĕ.**

**«Беллароза»** питĕ ир пулакан сорт. Икĕ уйăхран ăна пухса кĕртмелле. Ытти сортран тăрăхларах çаврака, шупка хĕрлĕрех хупăллă, вĕтĕ куçлă, шултра та яка пулнипе уйрăлса тăрать. Пысăк тухăçлă, шăрăха тÿсĕмлĕ, тутлă та кĕрпеклĕ. Ăшĕ сутăрах сарă. Тăмлă йывăр çĕрсĕр пуçне кирек епле вырăна та кăмăллать. Лайăх упранать. Кукша, рак, нематода, фитофтороз, хура туна чирĕсене парăнмасть.

Вăрлăха лартиччен 2-3 эрне маларах пĕр-пĕр пÿлĕме урайне шăтарма сапаласа хумалла. Шултра çитĕннине шута илсе вăрлăхсен хушшине 30-40 см, ретсен хушшине 70-75 см хăварма сĕнеççĕ.

**«Гала»** ир пулакан сорт, икĕ уйăх çурăран ăна кăлармалла та. Шурăрах сарă хупăллă, яка, унашкаллине шуратма аван. Кăлариччен 1-2 эрне маларах аврне çулса хурсан «Гала» лайăх упранать. Кукша, рак, нематода чирĕсем çулăхсах каймаççĕ. Ризоктониоз, фитофтороз вара çулăхма пултарать.Чăх çăмартинчен пысăках мар вăрлăха лартмалла. Лартиччен 3-4 кун маларах вара ăна хĕвел çинче тытмалла.

**«Рябинушка»** вăтам ир пулакан сорт, ăна лартнă хыççăн 80-90 кунран кăлараççĕ. Тухăçĕ пысăк. Тăрăхларах, пĕчĕк куçлă, яка та хĕрлĕ хупăллă, сарăрах шупка ăшлă, крахмал шайĕ 11-18 процент. «Рябинушкăна» нумай çул ÿсекен курăк, кĕрхи культура, пăрçа йышшисем ÿснĕ çĕре лартсан аванрах. Лайăх упранать.

**«Чайка»** вăтам кая юлса пулакан сорт. Пысăк тухăçлă, тăрăхларах çаврака, тарăнрах куçлă. Яка та сарă хупăллă. Ăшлăхĕ сутă сарă. Крахмал шайĕ 12,2-15,3 процент. Лайăх тутăллă. Аван упранать. Çĕрулми ракĕпе вирус чирĕсем çулăхсах каймаççĕ. Ризоктониозпа тата кукшапа чирлес хăрушлăх пулма пултарать.

## Ĕне хырăмне хăяр пăсмĕ

**? Иртнĕ çул хăяр йăтăнса пулнăччĕ. Ниçта хума çуккипе питĕ нумай тăварларăм. Хамăр вара хĕл каçипе те темиçе банка кăна пуштрăмăр. Уксуспа тăварланă хăяра пĕтĕ ĕнене çитерме юрать-и? Ĕне июнь уйăхĕнче пăруламалла.**

**Нина ИЛЬИНА. Сĕнтĕрвăрри районĕ, Этнескер.**

– Хăвăра валли çиме тăварланă хăяр ĕне хырăмĕшĕн те пăсăк пулас çук. Хăяр шывĕ хырăмлăха лайăхрах ĕçлеттерме çеç пулăшĕ. Ăна шыва хушса памалла. Кунне пĕрер банка (3 л) çитерсен çитет, – тесе пĕлтерчĕ пире Юрий Николаев ветеринар. – Пăнтăхса кăвакарни кăна ан пултăр. Унсăрăн ĕне наркăмăшланма пултарать.

## Шăтăклă пăрçа

**? Иртнĕ çул пасартан пăрçа туянтăм. Ак хайхи, шăтăклă-шăтăклă. Акрăм, анчах шăтса тухмарĕ. Вăл пăрçа манăн тата пур. Мĕн тума сĕнетĕр?**

**Иван КРАСНОВ. Шупашкар.**

Хисеплĕ Иван Захарович, сирĕн вăрлăха пăрçана тапăнакан хурт çинĕ, вырăсла ăна гороховая зерновка е брухус теççĕ. Çапла пĕлтерчĕ пире Раççей ялхуçалăх центрĕн ÿсен-тăрана хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ **Елена СОКОЛОВА.** Специалист сăмахĕсем тăрăх – сиенленнĕ пăрçа шăтаслăхĕ чакать, анчах çĕр процентĕпех мар, çурри те пулин шăтса тухмалла. Чылай чухне шăтăклă пăрçа ним пулман пекех шăтса тухать. Акиччен ăна шывра шÿтермелле: хурчĕ çиеле тухĕ. Ăна пухса илсе çунтарса ямалла. Куçа курăнман хурт çăмарти те вилтĕр тесен чирлĕ пăрçана виçĕ кунччен шÿтермелле. Паллах, çак вăхăтра вăл шăтма пуçлать, унашкаллине акма чăрмавлăрах ĕнтĕ, анчах вăл лайăхах шăтмалла.

Пăрçана хурт тапăнасран май пур таран иртерех акма тăрăшмалла: сивве вăл аванах чăтса ирттерет, хурт-кăпшанкă çăмарта хума ĕлкĕриччен вара чечеке ларать. Кĕркунне çĕре пĕр кĕреçе тарăнăш чавса хăвармалла.

Малашне вара симĕс тĕслĕ сорт суйласа илме тăрăшăр, саррисемпе танлаштарсан вĕсене хурт сахалрах тапăнать.

Вăрлăха акиччен морозильника хурса шăнтма та юрать. Пахалăхĕпе шăтаслăхĕ чакмĕ, хурчĕ пулсан вара ытларах пайĕ вилĕ. Пăрçа чечекленнĕ вăхăтра ăскăчпа 10 хут сулласа илнĕ хушăра 15-20 нăрă тытсан йăрана карбофоспа е фуфанонпа сапмалла, эрне иртсен çакнах тепĕр хут тумалла.

## Уяв умӗн – иртерех

**РФ Пенси фончӗн Чăваш Енри уйрăмӗ Пĕтӗм тӗнчери хӗрарăмсен уявӗ умӗн пенсие иртерех парассине пӗлтерет.**

Уяв тата кану кунӗсене шута илсе почта уйрăмӗсем пенсие çак графикпа çитерӗç:

мартăн 6-мӗшӗнче – мартăн 6, 7 тата 8-мӗшӗсемшӗн;

мартăн 7-мӗшӗнче – мартăн 7, 8 тата 9-мӗшӗсемшӗн;

мартăн 10-мӗшӗнчен – çирӗплетнӗ графикпа.

## Салтака кайса килчӗ. Укçа тивӗçмерӗ

**«Хресчен сасси – Кил» хаçата чунтан юратса вулатăп. Тавах пархатарлă ӗçӗршӗн.**

**Манăн мăнук хăр тăлăх. 2013 çулта вăл салтака кайрӗ. Муркаш районӗн çар командирӗ тăлăх ачана уйăхсерен укçа куçарса тăрасса шантарнăччӗ. Çулталăкран мăнукăм салтакран таврăнчӗ, анчах ăна пӗр пус та тӳлемен. Вӗçне-хӗрне мӗнле тухмалла-ши?**

**Роза САВЕЛЬЕВА.**

**Элӗк районӗ, Мăн Ямаш ялӗ.**

Хисеплӗ вулаканăмăр, сирӗн çырăвăра Чăваш Республикин Çар комиссарне ярса патăмăр. Муркаш тата Элӗк районӗсен Çар комиссариатӗнчен çакăн пек хурав илтӗмӗр:

– Хисеплӗ Роза Васильевна! Сирӗн çырăвăра тӗплӗн пăхса тухрăмăр. Элӗк районӗн халăха социаллă пулăшупа тивӗçтерекен орган представителӗ мăнукăра, Дмитрий Сергеевич Савельева, çара каякан тăлăхсен мӗнле çăмăллăхсем пуррине ăнлантарнă. «Çар çыннисене уйрăм тӳлевпе тивӗçтересси çинчен» федераци саккунӗпе килӗшӳллӗн çар çыннине служба вӗçленсен çар должноçӗн пилӗк окладӗ чухлӗ пӗр хут паракан пособие тивӗçтерӗççӗ, тăлăхсен категорине кӗрекенсене вара – çар должноçӗн пилӗк окладӗ чухлӗ.

Çапла майпа сирӗн мăнукăра служба вӗçленсен çар должноçӗн пилӗк окладӗ чухлӗ укçа тӳлемелле пулнă. Çакна ЧР Муркаш тата Элӗк районӗсен Çар комиссариачӗн уйрăмӗн пуçлăхӗ те, Элӗк районӗн халăха социаллă пулăшупа тивӗçтерекен органӗ те тӳлемест. Ăна мăнукăр служба пулнă çар чаçӗн командованийӗн тӳлемелле.

Пособи тӳлеме ирӗк паракан документ вăл – çар чаçӗ е çар уйрăмӗ çулсерен хатӗрлекен тăлăх çар çыннисен списокӗ. Тăлăх пулнине документсен копийӗпе çирӗплетмелле. Ку вăл ашшӗ-амăшӗн вилнӗ хучӗ; ашшӗ-амăшӗн правинчен хăтарнă суд йышăнăвӗ; опекăпа попечительство органӗн йышăнăвӗ; ача садӗнчен е вӗренӳ уйрăмӗнчен илнӗ справка тата ытти те пулма пултарать.

Сире çар чаçӗн командованийӗ ячӗпе заявлени çырма сӗнетпӗр. Лару-тăру улшăнмасан мăнукăр служба пулнă çар чаçӗн вырăнти çар прокуратурине заявлени çырма тивет.

### ЭСИР ЫЙТНĂЧЧӖ

## Кăкăр çыххисӗр çывăрмалла

**Ирпе те, каçпа та кăкăр çыххипе çӳретӗп: капла меллӗрех те, кăкăр та усăнмасть. Тантăшăм вара çакă сывлăхшăн сиенлӗ тет. Чăнласах та сиенлӗ-ши вара?**

**Светлана КАРПОВА.**

Пӗрмаях кăкăр çыххипе çӳрени сиенлӗ. Унпа 12 сехетрен ытла çӳреме юрамасть, çывăрнă чухне ăна вуçех салтса хумалла. Статистикăпа килӗшӳллӗн кăкăр çыххине пачах хывмасăр çӳрекен тăватă хӗрарăмран виççӗшӗн рак аталанать; талăкра 12 сехетрен ытларах хывмасăр çӳрекенсен, анчах çывăрнă вăхăтра салтакан çичӗ хӗрарăмран пӗрин каллех çак инкек пулать; кăкăр çыххипе пачах усă курман 168 хӗрарăмран пӗри чирлет.

Тăтăшах кăкăр çыххипе çӳресен вăхăт иртнӗçемӗн кăкăр мышцисем тытми пулаççӗ, çавна май кăкăр усăнать. Апла пулсан усăнасран тăхăнатăн тенин усси çук.

Пралук тирнӗ е мелсӗр те тăвăр кăкăр çыххи тăхăнса çӳрени те сиенлӗ. Илемлӗрех курăнассишӗн хăвăр сывлăхăр çинчен те манса ан кайăр.



**ИММУНИТЕТА ÇИРӖПЛЕТМЕ.** Кастрюле 400 мл хӗрлӗ кăшман сӗткенӗ, 100 мл алоэ сӗткенӗ, 200 г пыл ярса çулăм çине лартмалла, вӗреме кӗрсенех ăна çулăм çинчен илмелле. Сивӗтмелле, 200 мл шур эрех хушса тӗксӗм тӗслӗ кӗленчесене тултармалла. Пӗр талăк пӳлӗмре лартмалла, унтан холодильника куçармалла. Кунне 3 хут, апат умӗн 15 минут маларах 30-шар мл ӗçмелле.

### СИППЕ КАЙТĂР

## Мышцăсем ыратсан

✓ Стаканăн 1/4 пайӗ чухлӗ сӗте 5 шăл ыхра ярса пилӗк минут вӗретмелле. Кăштах сивӗнессе кӗтмелле, унтан ăна ывăça илсе ыратакан вырăна сăтăрмалла.

✓ Лаванда çăвне 5-7 тумлам илсе 1 кашăк тип çупа хутăштармалла, «шыв мунчинче» кăшт ăшăтса ыратакан вырăна сӗрмелле.

✓ Çур литр шур эрехе висӗ банан хуппине вӗтетсе ямалла, икӗ эрне тӗттӗм вырăнта тытмалла, сăрăхтармалла. Ыратакан вырăнсене ирпе-каçпа сăтăрмалла.

✓ 2 стакан шыва 50-70 г качака (йытă) çăмӗ ямалла, 1 кашăк тăвар хушса 30 минут вӗретмелле. Унтан çăма марля витӗр сăрăхтармалла та ыратакан вырăна компресс пек çирӗплетсе хумалла. Талăкран çыхса улăштармалла. Çакнашкал компреса 3-5 кунччен тумалла.




*Асăрхаттарни: халăх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## Уй-хир ӗçӗсене ирттерме – çăмăллатнă кредит

Раççей ялхуçалăх банкӗ сезонри уй-хир ӗçӗсене ирттерме аграрисем валли кредитăн процент ставкине пӗчӗклетнӗ. РФ правительстви йышăнăвӗпе – субсидилес тата ялхуçалăх таварӗ туса илекенсем патне укçана çийӗнчех çитерес йӗркене палăртасси – заемщиксемшӗн кредитăн процент ставки иртнӗ çулхи шайрах юлӗ.

Раççей ялхуçалăх банкӗшӗн уй-хир ӗçӗсене кредитласси – тӗп тӗллевсенчен пӗри. 2015 çулта банк çак енӗпе аграрисене укçа-тенкӗпе туллин тивӗçтерме хатӗр. Экономикăри йывăр лару-тăрăва пăхмасăр ялхуçалăхне пулăшассипе мерăсем йышăнни çурхи ӗçсене вăхăтра та пахалăхлă срокра ирттерме май парӗ.

*Реклама*

*РФ Тӗп банкӗн 3349-мӗш №-лӗ генеральнăй лицензийӗ.*

### ШУТА ИЛМЕ

## Ыйху тутлă пултăр!

**Юлашки вăхăтра çывăрса тăранман çынсен йышӗ палăрмаллах ӳссе пырать. Çакă ӗç тухăçлăхӗнче те, çын сывлăхӗнче те палăрать. Ыйхă тарни мӗнпе çыхăннă-ха?**

Çывăрса тăранайманни чылай чухне ӗç нумайӗпе, канăçа çухатнипе, кофе ӗçнипе çыхăннă. Çакăн çумне сехечӗ-сехечӗпе телевизор пăхни, компьютерпа, кӗçсе телефонӗпе усă курни те хушăнать.

Эпир хамăра епле туяссий тӳрремӗнех мӗн чухлӗ çывăрнинчен килет:

◆ 7-9 сехет çывăрмалла.

◆ 5-7 сехет çывăрсан чылайăшӗн тимлӗхӗ, астăвăмӗ чакать, калас тенине уçса парасси йывăрланать, кăмăл-туйăм япăхланать.

◆ 5 сехетрен сахалтарах çывăрсан сывлăхпа çыхăннă йывăрлăхсем палăраççӗ. Сахăр диабечӗпе чирлес хăрушлăх 2,5 хут ӳсет, чӗрепе аптрасси – 45 процент.

• Йӗркеллӗ çывăрса пурăнмасан хырăмлăхпа пыршăлăх чирӗсем пуçланаççӗ, мӗншӗн тесен çак органсем тӗрӗс ӗçлесси шăпах вӗсем мӗнле каннинчен килет.

• Нерв тытăмӗ кирлӗ пек ӗçлеменнипе юн тымарӗсем пӗрӗнеççӗ, юна адреналинпа глюкоза тухнипе юн пусăмӗ хăпарса каять.

• Тăварлă, пылак, çуллă апат-çимӗç çиес туртăм вăйланать, çын самăрăлма пуçлать.

• Машинăпа çӳресси йывăрланать. Тест кăтартăвӗсем тăрăх – çывăрса тăранайманнипе эрех ӗçнин витӗмӗ пӗрешкелтерех:

– 17-19 сехет çывăрманни юнра 0,5 промиль эрех пуррипе танах.

– 21 сехет çывăрманни вара – 0,8 промильпе танлашать.

Чылайăшӗ çывăрас умӗн питӗ хытă шухăшланипе, канăççăрланнипе ыйхă килменнипе ӳпкелешет. Хальлӗхе йывăр шухăш кăмăла сиреken эмел çук. Çавăнпа çыннăн хăйне хăй пулăшмалла: лайăх мар шухăшсенчен хăпмалла.

Ыйхă лăпкă та сывă пултăр тесен çак йӗркесене пăхăнмалла:

• **Яланах пӗр вăхăтра вăранма тăрăшмалла, канмалли кунсенче те.** Çакă организмри «сехете» пӗр тикӗс ӗçлеме пулăшӗ.

• **Кăнтăрла ан çывăрăр.** Çывăрманнипе хăвăра япăх туйсан кăнтăрлахи апат çинӗ хыççăн 3 сехетсенче кăна выртса илме тăрăшăр. Анчах сехетрен ытла ан çывăрăр. Ирхи е каçхи ыйхă халсăрлăх туйăмӗ хăварса кăмăла çеç пăсать.

• **Çан-çурăма хускатма ан манăр.**

• **Каçхи апата çывăриччен 2 сехет маларах çийӗр.**

• **Кунăн иккӗмӗш çуррине кофеинлă напиток ӗçмелле мар.** Кофе ӗçнине пăхмасăрах чиперех çывăрса каятăр пулсан та тутлă ыйхă пулмӗ.

• Çывăриччен сехет маларах телевизорпа компьютер шнурне розеткăран кăлармалла.

• **Çывăрма хатӗрлекен хăйне евӗр йӗрке шухăшласа тупмалла.** Ку вăл лăпланма пулăшакан кӗвӗ, çăмăлтарах кӗнеке вулани, ăшă ванна кӗни пулма пултарать.

• **20 минут хушшинче çывăрса каяйман вырăн çинчен тăрса мӗнле те пулин лăпкă ӗç тумалла.** Çывăрмалли пӳлӗме çывăрас килнине туйсан çеç кӗмелле. Çапла тен темиçе хут та тума тивӗ.

• **Çывăрмалли пӳлӗмре яланах тӗттӗм, ăшă, шăп пулмалла.**

• **Вырăн меллӗ пулни те питӗ пӗлтерӗшлӗ.**

### «КАПКĂН» КӖТЕСӖ

Пӗр арăм тантăшне каласа парать:

– Эрне каялла упăшкапа вăрçăнса кайрăм. Кӗпе-йӗм çумастăп, пӳлӗмре пуçтармастăп, апат хатӗрлеместӗп... Турăçăм! Мирлешесчӗ тесе ан шухăшлатăрччӗ кăна.




### РЕКЛАМА, ПӖЛТЕРӲСЕМ

*СУТАТĂП / ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20x20x40 – 33 руб., 12x20x40 – 29 руб., 10x20x40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20x20x40, 12x20x40, 9x20x40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**29. Плуги, опрыскиватели, косилки,** грабли, картофелесажалки, погрузчики, домильные аппараты. **ДОСТАВКА!** Т.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**58. Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** чернозем. Д-ка. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

## ТУНТИКУН, 9

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 «Непутевые заметки» 12+
6.30 Кино в цвете. «Весна на Заречной улице»
8.20 «Армейский магазин» 16+
8.55 «Здоровье» 16+
10.20 Премии «Оскар-2014» и «Золотой глобус-2014» за лучший анимационный фильм. «Холодное сердце»
12.15 Х/ф «ГУСАРСКАЯ БАЛЛАДА»
14.00 К 35-летию любимого фильма. «Москва слезам не верит» Рождение легенды» 12+
15.10 Х/ф «МОСКВА СЛЕЗАМ НЕ ВЕРИТ»
18.00 «Точь-в-точь» 16+
21.00 «Время»
22.00 Т/с «ДОЛГИЙ ПУТЬ ДОМОЙ» 16+
0.00 Х/ф «БЕРТОН И ТЕЙЛОР» 16+
1.45 Х/ф «БОЛЬШАЯ БЕЛАЯ НАДЕЖДА» 16+
3.40 «Мужское / Женское» 16+

### РОССИЯ 1

5.20 Х/ф «ДЕВУШКА С ГИТАРОЙ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.20 «Хор Турецкого. Мужской взгляд на любовь»
13.00, 14.25 «Смеяться разрешается»
15.50 «Когда поют мужчины»
17.50 Х/ф «ОЖЕРЕЛЬЕ» 12+
20.35 Х/ф «ПОЗДНИЕ ЦВЕТЫ» 12+
0.25 Х/ф «45 СЕКУНД» 12+
2.30 Х/ф «ВАС ВЫЗЫВАЕТ ТАЙМЫР»
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### НТВ

6.25 Т/с «ГРУЗ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 19.00 Сегодня
8.20, 10.20, 13.20, 19.25 Т/с «ЗАХВАТЧИКИ» 16+
0.30 Х/ф «ВОСЬМЕРКА» 16+
2.00 Главная дорога 16+
2.30 Квартирный вопрос 0+
3.25 Дикий мир 0+
3.40 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
5.10 Т/с «ППС» 16+

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «АРТИСТКА»
12.10 «Острова»
12.50, 1.40 Д/ф «Тетеревиный театр»
13.30 «Пешком...» Москва бронзовая
14.00 К 70-летию Великой Победы. «Война на всех одна»
14.15 Х/ф «МАТЬ МАРИЯ»
15.45 «Больше, чем любовь»
16.25 «Ночь в цирке»
18.00 Х/ф «ЛЮДИ И МАНЕКЕНЫ»
19.15 Театру «Сатирикон» - 75! Юбилейный вечер
20.30 «Песня не прощается...1973 год»
21.35 «Линия жизни»
22.30 Х/ф «КОКОКО» 16+
23.55 «Джазовые вечера в Коктебеле» Международный фестиваль в Крыму
1.25 М/ф «Королевский бутерброд» «Другая сторона»
2.20 П.И. Чайковский. Серенада для струнного оркестра

## ЫТЛАРИКУН, 10

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ДОЛГИЙ ПУТЬ ДОМОЙ» 16+
14.25, 15.15, 2.20, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Структура момента» 16+
4.15 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 0.50 «Обыкновенное чудо академика Зильбера» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ЛЮБА. ЛЮБОВЬ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ВЗГЛЯД ИЗ ВЕЧНОСТИ» 12+
1.50 Т/ф «КОЛЬЕ ШАРЛОТТЫ»
3.25 «Призрак черной смерти» 16+
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-погода. Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41, 14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-погода. Утро Чувашии
9.00 В центре внимания. Капитальный ремонт
9.30 Дороги Чувашии
9.40-9.55 Сельская жизнь (на чувашском языке)

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
9.00, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Все будет хорошо!» 16+
19.40 «Говорим и показываем» 16+
20.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ» 16+
1.30 Д/ф «Настоящий итальянец». «Кино по-итальянски» 0+
1.45 Внимание! 2.20 «Судебный детектив» 16+
3.15 Дикий мир 0+
3.40 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
5.10 Т/с «ППС» 16+

## ЮНКУН, 11

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15, 4.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ДОЛГИЙ ПУТЬ ДОМОЙ» 16+
14.25, 15.15, 2.20, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Политика» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 0.30 «Последняя миссия «Охотника» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ЛЮБА. ЛЮБОВЬ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ВЗГЛЯД ИЗ ВЕЧНОСТИ» 12+
22.50 Специальный корреспондент 16+
1.35 Т/ф «КОЛЬЕ ШАРЛОТТЫ»
3.00 «По следам Ивана Сусанина» 12+
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-погода. Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41, 14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-погода. Утро Чувашии

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
9.00, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Все будет хорошо!» 16+
19.40 «Говорим и показываем» 16+
20.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
22.30 «Анатомия дня»
23.20 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Челси» (Англия) - «ПСЖ» (Франция)
1.35 «Лига чемпионов УЕФА. Обзор»
2.05 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ» 16+
3.45 Дикий мир 0+
4.25 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+

## КĔÇНЕРНИКУН, 12

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15, 4.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ДОЛГИЙ ПУТЬ ДОМОЙ» 16+
14.25, 15.15, 1.25 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.20, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Григорий Горин. «Живите долго» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 0.30 «Одесса. Герои подземной крепости» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ЛЮБА. ЛЮБОВЬ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ВЗГЛЯД ИЗ ВЕЧНОСТИ» 12+
22.50 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
1.35 Т/ф «КОЛЬЕ ШАРЛОТТЫ»
3.00 «Камчатка. Жизнь на вулкане»
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-погода. Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41, 14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-погода. Утро Чувашии
9.00 В центре внимания. Финансовые пирамиды
9.30-9.55 Доступная среда. С сурдопереводом

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
9.00, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Все будет хорошо!» 16+
19.40 «Говорим и показываем»
20.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ. СУДЬБЫ» 16+
22.25 «Анатомия дня»
22.50 Футбол. Лига Европы УЕФА. «Наполи» (Италия) - «Динамо Москва» (Россия)
1.00 «Лига Европы УЕФА. Обзор»
1.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ» 16+
3.15 «Дачный ответ» 0+
4.10 Дикий мир 0+
4.25 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
5.15 Т/с «ППС» 16+

## ЭРНЕКУН, 13

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 4.15 «Модный приговор»
12.20 Т/с «ДОЛГИЙ ПУТЬ ДОМОЙ» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.20 «Человек и закон» 16+
19.15 Чемпионат мира по биатлону. Женщины. Эстафета. Прямой эфир из Финляндии. По окончании - программа «Время»
21.30 «Голос. Дети»
23.45 «Вечерний Ургант» 16+
0.40 Х/ф «ФЛЕМИНГ» 16+
2.20 Х/ф «ВСЯ ПРАВДА О ЧАРЛИ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Главная сцена» Специальный репортаж
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ЛЮБА. ЛЮБОВЬ» 12+
16.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
21.00 «Главная сцена»
23.25 Х/ф «ВАСИЛЬКИ ДЛЯ ВАСИЛИСЫ» 12+
1.25 Х/ф «ДВА БИЛЕТА В ВЕНЕЦИЮ» 12+
3.20 Комната смеха
4.25 Вести. Дежурная часть

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 17.10-17.30 Вести-погода. Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41, 14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-погода. Утро Чувашии
9.10 Земля трудов и вдохновения. К 80-летию Красноармейского района
9.25 Телеюрă
9.50-10.05 Точка зрения
11.35-11.55 Вести-погода. Вести-ПФО

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
9.00, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Прокурорская проверка» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Все будет хорошо!» 16+
19.40 «Говорим и показываем» 16+
20.40 Х/ф «АЗ ВОЗДАМ» 16+
0.35 Х/ф «ЧЕСТНАЯ ИГРА» 16+
2.25 «Космическая держава» 0+
3.10 Дикий мир 0+
3.35 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
5.10 Т/с «ППС» 16+

## ШĂМАТКУН, 14

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.35, 6.10 «В наше время» 12+
6.00, 10.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
6.35 Х/ф «ЗОЛОТОЙ ТЕЛЕНОК»
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Юрий Яковлев. Последняя пристань» 12+
12.20 «Идеальный ремонт»
13.15 «Страна на «колесах» 16+
14.20, 15.15 «Голос. Дети»
16.50 «Кто хочет стать миллионером?»
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 «Сегодня вечером» 16+
21.00 «Время»
21.20 «Танцуй!»
23.40 Х/ф «ОТЕЦ-МОЛОДЕЦ» 16+
1.35 Х/ф «ЯВЛЕНИЕ» 16+
3.20 Х/ф «ДОБРЫЙ СЫНОК» 16+
4.55 «Мужское / Женское» 16+

### РОССИЯ 1

4.40 Х/ф «ПО ГЛАВНОЙ УЛИЦЕ С ОРКЕСТРОМ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.20, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 Субботник
9.30 «Танцы»
10.05 «Николай Вавилов. Накормивший человечество»
11.30 Х/ф «ЛЕШИЙ» 12+
14.30 Субботний вечер
16.45 «Танцы со звездами» Сезон - 2015
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «МОЙ БЛИЗКИЙ ВРАГ» 12+
0.30 Х/ф «КРАСОТКА» 12+
2.30 Х/ф «ГРУСТНАЯ ДАМА ЧЕРВЕЙ» 12+
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш Ен
10.05-11.00 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### НТВ

5.55, 0.55 Т/с «ГРУЗ» 16+
7.30 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Поедем, поедим!» 0+
11.50 Квартирный вопрос 0+
13.20 Своя игра 0+
14.15 «Я худею» 16+
15.10 «Соль и сахар. Смерть по вкусу» Научное расследование Сергея Малоземова 12+
16.10 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 Следствие вели... 16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
22.00 Ты не поверишь! 16+
22.55 Х/ф «АФЕРИСТКА» 16+
2.35 «ГРУ: тайны военной разведки» 16+
3.20 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
5.35 Т/с «ППС» 16+

## ВЫРСАРНИКУН, 15

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «ЗОЛОТОЙ ТЕЛЕНОК»
8.05 «Служу Отчизне!»
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Теория заговора» 16+
13.10 К юбилею актера. «Сергей Юрский. «Я пришел в кино как клоун» 12+
14.20 Коллекция Первого канала
18.15 Чемпионат мира по биатлону. Мужчины. Масс-старт. Прямой эфир из Финляндии
18.55 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 Х/ф «ЛЮБИТ НЕ ЛЮБИТ» 16+
0.00 Бокс. Бой за титул чемпиона мира. Сергей Ковалев - Жан Паскаль 12+
1.00 Х/ф «ДЖУЛИЯ» 12+
3.20 «Мужское / Женское» 16+
4.15 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.30 Х/ф «ПЯТЬ МИНУТ СТРАХА»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10, 2.40 «Не жизнь, а праздник» 12+
12.10, 14.30 «Смеяться разрешается»
14.20 Местное время. Вести-Москва
15.00 «Один в один» 12+
18.00 Х/ф «ПЛОХАЯ СОСЕДКА» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.35 Х/ф «ДУЭЛЬ» 12+
3.40 «Николай Вавилов. Накормивший человечество»

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### НТВ

6.25, 1.05 Т/с «ГРУЗ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 15.35 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 СОГАЗ - Чемпионат России по футболу 2014/2015. «Спартак» - «Динамо»
16.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа» с Кириллом Поздняковым
20.00 «Список Норкина» 16+
21.10 Х/ф «ВОЕННЫЙ КОРРЕСПОНДЕНТ» 16+
23.10 «Контрольный звонок» 16+
0.10 «Таинственная Россия» 16+
2.40 «ГРУ: тайны военной разведки» 16+
3.25 Дикий мир 0+
3.40 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ВТОРАЯ» 16+
5.10 Т/с «ППС» 16+


## ĔÇ / РАБОТА

Реклама

**54. МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ** – в Подмосковье. Т. 89625997773.

**126.** В связи с началом строительства нового объекта **требуются монолитчики, каменщики.** Тел. 8-925-002-22-38.

**139. Монолитчики, каменщики** (г. Сыктывкар). Вахта, жилье, питание. Т. 8-909-305-93-45.

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРŸСЕМ

## СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**74. Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**78. Гравмассу, песок, щебень, керамблоки.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**80. Сортовой каменный УГОЛЬ** – 3600 р/тн. **Т. 89278471762.**

**96.** Магазин «Садовник». Поступление новых семян. Оптовые цены в розницу. Огромный выбор. **Батырево,** пр. Ленина, 48 «а», т. 89603071023 (также продаются семена лука Штуттгартер Ризен на обмен севка с нового урожая в соотношении 1,42). **Яльчики,** здание магазина «Магнит», II этаж. **Алатырь,** центральный рынок, рядом средними воротами. **Чебоксары,** ул. Энгельса, 27 «а», т.: 8(8352)57-12-22 (розница), 89053407624 (оптовикам).

**89. БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. **Доставка.** Документы. Т. 89373866629.

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**110. ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната.** Т. 8-927-665-61-75.

**111. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната **от производителя**. Д-ка. Уст-ка. Скидки. Т. 89876667423.

**112. ТЕПЛИЦЫ от производ-ля.** Д-ка. Установка. Т. 89875751707.

**118. СЕМЕНА** люцерны; **пшеницу, ячмень. Т. 8-906-136-36-88.**

**127. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133. СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; проволоку, столбы. Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

**787. Кирпич** любой, **гравмассу, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89033228078.

## ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.**
*Лиц. ЛО 21-01-001 096 от 06.06.2014г. МЗСР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает многие жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**38. Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**45. Лечение алкоголизма и табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368.
*Лиц. 5001001230 от 08.06,2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**70. ОКНА, ДВЕРИ, ПОТОЛКИ.** Доступные цены. Договор, гарантия. Замер и консультация – бесплатно. Т. 89170788391.

**77. Натяжные ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**134. Ремонт топливной аппаратуры** и форсунки для тракторов. Т. 89278429685.

**152.Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

## ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**28. Вăкăр, ĕне,** пăру, **сысна ами.** Т. 8-927-999-37-37.

**39. Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**50. Коров.** Т. 89278508564.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
«Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хайтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
РЕДКОЛЛЕГИ:
Е.Н. Николаева – пай редакторĕ
В.В. Петрова – корреспондент
С.Л. Павлов – тĕп редактор заместителĕ
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ
Номер редакторĕ – Е.Н. Николаева

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
тĕп редактор сумĕ – 62-04-54,
пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче капăлланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 809
Тираж 19716


* Рекламăпа пĕлтерŭсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерŭсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.